# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ 1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

59 (8626) № * Шăматкун, 2018 çулхи çурла (август) уйăхĕн 11-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ


**Районта**

## Çул тăвассин ыйтăвĕпе

Августăн 9-мĕшĕнче пирĕн районта ĕçлĕ çул çӳревпе Чăваш Республикин транспорт тата çул-йĕр хуçалăх министрĕ Владимир Иванов пулнă. Министр район администрацийĕн пуçлăхĕпе Ростислав Тимофеевпа тата унăн çумĕпе Алексей Матросовпа районта çул-йĕр юсас ĕçсене сӳтсе явнă, хыççăн вĕсем Ильинка ял тăрăхне çитсе курнă. Ĕçлĕ çул çӳрев вăхăтĕнче Васильевка выççăлкки патĕнчи çула кайса пăхнă. Ял тăрăхĕнче пурăнакансем асăннă яла каймалли çула юсама ыйтаççĕ. Владимир Иванов ку çул мĕнле шайра пулнипе паллашнă, ăна юсассин ыйтăвне Ростислав Тимофеевпа сӳтсе явнă.

## Пыл уявне чĕнеççĕ

Августăн 14-мĕшĕ – Пыл спасĕ. Пыл спасне халалласа августăн 17-мĕшĕнче Муркашра йăлана кĕнĕ «Сывлăх – пыл хурчĕн çунатти çинче» пыл уявĕ иртет.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев ертсе пынипе августăн 9-мĕшĕнче пыл уявне хатĕрленсе ирттерессипе ĕçлекен йĕркелÿ комитечĕн ларăвĕ иртнĕ, пĕлтерĕшлĕ ыйтусене сӳтсе явнă. Уяв 10 сехетре пуçланать, официаллă ăна 11 сехетре уçаççĕ. Çав кун пыл продукчĕсен ярмăркки те, ял тăрăхĕсен выставка-представленийĕ те, ача-пăчан вăйă программи те, художество пултарулăх коллективĕсен концерчĕ те, районти хурт-хăмăр ăстисен конкурсĕн тата ял тăрăхĕсен конкурс фестивалĕн çĕнтерӳçисене чысласси те пулаççĕ. Çав кунах шкул ярмăркки те ĕçлет.

Каçкÿлĕм вăра çамрăксем валли ятарлă программăпа пыл уявĕ малалла тăсăлĕ. **Тĕплĕнрех – çитес номерте.**

## Энциклопеди хатĕрлеççĕ

Районта Муркаш районĕн кĕске энциклопедийĕн çĕнĕ кăларăмне хатĕрлес ĕçсем анлă сарăлнă. Çак ĕçсене редакци канашĕ йĕркелесе пырать. Ăна район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев ертсе пырать. Канашăн иртнĕ ларăвне Чăваш кĕнеке издательствин директорĕ Валерий Комиссаров та хутшăннă. Энциклопедие кĕртмелли материалсене пухассипе районти ял тăрăхĕсем хушшинчи тĕп библиотека ĕçлет. Тĕп библиотека системин директорĕ Ирина Николаева ларура каласа панă тăрăх, район пурнăçĕпе, районăн паллă çыннисемпе çыхăннă материалсене энциклопедие кĕртме кирек камăн та районти тĕп библиотекăна та, çавăн пекех ялти библиотекăсене те çитерсе пама май пур.


**26 АВГУСТА – ПРИЕМ ДЕТСКОГО ВРАЧА-ОФТАЛЬМОЛОГА**

**Адрес: с. Моргауши, ул. Мира, д. 15**

**Запись по тел. 8-967-475-87-57.**

Имеются противопоказания. Проконсультируйтесь со специалистом. 1-2.


**Интервью**

# Михаил ИГНАТЬЕВ: Халăх ырлăхĕшĕн ĕçлемелле. Унтан ытла тĕллев çук



**Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ялан халăхпа пĕрле пулнине, çынсен ыйтăвне çийĕнчех татса пама тăрăшнине пирĕнтен кашниех пĕлет. Чăн та, тивĕçĕ çапла унăн: тăван республикăшăн тата унăн çыннисемшĕн яваплă пулнăран тавра курăмĕпе шухăшлавĕ те анлă пулмалла, паян тунă йышăну Чăваш Енпе унта пурăнакансен малашлăхне мĕнле витĕм кӳнине тĕрĕс хакламалла. Сумлă должноçе йышăннă май алăри тилхепене çирĕп тытса тĕрĕс çулпа пымаллине самантлăха та манма юрамасть. Республика ертӳçи пулнипе пĕрлех Михаил Васильевич – мăшăр, ашшĕ, тăван-хурăнташлă çын. Апла пулсан ĕç графикĕнче çывăх çыннисем валли те вырăн тупмалла. Республика пурнăçĕпе, унăн аталанăвĕпе çыхăннă чылай ыйтăва Чăваш Ен ертӳçипе Михаил Игнатьевпа утă уйăхĕн 26-мĕшĕнче «Хыпар» тата «Советская Чувашия» хаçатсен тĕп редакторĕсем Татьяна Вашуркинăпа Владимир Васильев сӳтсе яврĕç.**

**– Михаил Васильевич, паянхи куна эсир пирĕнпе, журналистсемпе, тĕл пулнинчен пуçланине палăртма кăмăллă. Апла сирĕн ĕç кунĕ прессăран тытăнать…**

– Кунта çапах та кăштах тӳрлетмелли пур ман. Ирхине алла хаçат-журнал тытиччен эпĕ зарядка тăватăп. Паян, акă, ĕçе велосипедпа килтĕм. Залив хĕррипе иртнĕ май тавралăха, иртен-çӳрене сăнарăм. Ашшĕ-амăшĕпе ачисем, ватă çынсем уçăлса çӳреççĕ, ытарайми çут çанталăкăн куçа астаракан илемĕпе, анлă Атăлпа киленеççĕ. Çынсен савăннине, вĕсем ыранхи куна шанчăкпа пăхнине кура чунăм хавасланать, ĕçе хавхалануллă кăмăлпа çитетĕп.

**– Эсир залив хĕррипе иртнĕ чух сирĕнпе пырса калаçакансем пурах ĕнтĕ. Малтанхи çулсенчипе танлаштарсан ун пеккисен йышĕ ӳсрĕ-и?**

– Пырса калаçакансен йышĕнчен ытла халăх мĕнле ыйту çĕкленине тишкеретĕп. Маларах çынсем пĕр-пĕр темăна хĕрсе кайсарах хускататчĕç пулсан, халĕ ыйтусене виçсе хаклакан йышланчĕ. Ирсерен эпĕ спорт валли вăхăт уйăрнине ыррăн тĕлĕнсе палăртакансем те пур.

Урамра тĕл пулакан кашни çыннăн ыйтăвне вырăнтах татса параймăн. Хăшĕсене специалистсен тарăннăн тишкермелле. Çавăнпа эпĕ Чăваш Енĕн влаç органĕсен официаллă порталне /www.cap.ru/ ыйтса çырма сĕнетĕп.

Ыйтусен шучĕ ӳссе пырать темĕп, мĕншĕн тесен влаç органĕсем ĕçленине халăх курать.

**– Михаил Васильевич, экологи пирки те калаçас килет. Шупашкар хулинче ырă мар шăршă тăтăшах тăнине пурте сисрĕмĕр. Тепĕр çĕрте тасатмалли сооруженисем юрăхсăра тухнă е пули-пулми вырăнта çӳп-çап тăкса тултараççĕ. Кашни çав кăлтăкшăн яваплисем пур. Эсир вĕсем пирки мĕн калана пулăттăр?**

– Экологи хăрушсăрлăхĕ енчен пирĕн республика Раççейри чи таса вунă регион шутĕнче. Çав вăхăтрах хăш-пĕр предприяти-организаци е уйрăм çынсем тавралăха сиен кӳнине эпир курмăш тăваймастпăр. Вĕсенчен унччен те çирĕп ыйтнă, малашне те çаплах пулĕ.

Шупашкарти ырă мар шăрша «Юрма» кайăк-кĕшĕк фабрики сарать тесе шухăшланăран Роспотребнадзорăн республикăри управленийĕ тĕрĕслев иртерчĕ. Чăх-чĕп каяшне компостлакан технологи кирлĕ шайра маррине кура предприяти ячĕпе асăрхаттарса хут çырчĕ. Малашне «Юрма» каяшран биоудобрени хатĕрлесшĕн.

Темиçе çул каялла Çĕнĕ Шупашкар енчен те ырă мар шăршă сарăлатчĕ. Унти биологилле тасатмалли сооруженисене çĕнĕлле ĕçлеттерме бюджетран 1 миллиард тенкĕ хыврăмăр. Халĕ вăл ыйту татăлчĕ.

«Çĕрпӳ беконĕ» сысна комплексĕнчен инçех мар вырăнта пурăнакансем сывлама май çук тенине илтме тиветчĕ. Предприятире халĕ тислĕке çĕнĕлле тирпейлеççĕ. Ун валли комплексăн, паллах, укçа самай хывма тивнĕ. Мĕн тăвас тетĕн, тăкакланмасăр май çук.

(Малалли 2-мĕш стр.)

**Чăваш Енри строительство отраслĕн хисеплĕ ĕçченĕсем тата ветеранĕсем!**

Сире професси уявĕпе чунтан саламлатăп!

Паян строительство республикăн экономика аталанăвĕн çирĕп никĕсĕ тесе туллин çирĕплетме юрать. Хальхи вăхăтра Чăваш Енре комплекслă строительствăн 56 проекчĕ, çавăн пекех садиксемпе шкулсен, больницăсемпе культура учрежденийĕсен, спорт, çул-йĕр хуçалăхĕн объекчĕсен реконструкцийĕпе тата строительствипе çыхăннă вун-вун программа пурнăçланать.

Çулсерен нумай хваттерлĕ çуртсене тĕпрен юсаççĕ. Пуçарулла бюджет ăнăçлă аталанать. Йышлă çемьесене, çамрăк специалистсене, тăлăх ачасене пурăнмалли условисене лайăхлатма пулăшакан социаллă проектсем ĕçлеççĕ. Çакнашкал патшалăх саккасĕсем республикăн строительство отраслне туллин аталанма майсем туса параççĕ.

РФ Президенчĕн стратеги задачисене тĕпе хурса Чăваш Республикинче 2024 çул тĕлне 1 миллион тăваткал метр çурт-йĕр хута яма палăртнă. Чăваш Ен строителĕсен ăсталăхĕ çак тĕллеве пурнăça кĕртме тата хамăрăн гражданнсене хăтлă хваттерсемпе тивĕçтерме май парасса шанса тăратăп.

Кашни объекта çĕклеме вун-вун çын – архитекторсем, инженерсем, геодезистсем, проектировщиксем, монтажниксем, рабочисем, ытти специалистсем – тӳпе хываççĕ. Пирĕн хăрушсăрлăх, хăтлăх, илемлĕх вĕсен пĕлĕвĕнчен, ăсталăхĕнчен, яваплăхĕнчен нумай килет.

Чăваш Ен строительство комплексĕн мĕн пур ĕçчене професси юратнăшăн чунтан тав тăватăп! Хуласемпе ялсен çĕнĕ сăн-сăпачĕ, микрорайонсемпе картишсен тирпейлĕхĕ – сирĕн ĕçĕн пĕлтерĕшне çирĕплетекен тĕп паллăсем. Ĕмĕтĕрсем çитсе пычăр, сирĕн алăпа çĕкленнĕ кашни çуртра тăнăçлăхпа килĕшӳ хуçаланччăр! Телей, çирĕп сывлăх, ырлăх, çĕнĕ çитĕнӳсем сунатăп!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М. ИГНАТЬЕВ.**

**Спортăн хисеплĕ тусĕсем!**

Физкультурник кунĕпе сире чун-чĕререн саламлатăп!

Çак уяв ку е вăл майпа спортпа çыхăннă кирек камшăн та пĕр пекех çывăх: спортсменсемшĕн те, тренерсемшĕн те, спорт юхăмĕн ветеранĕсемшĕн тата сывă пурнăç йĕркине тытса пыракан кашни çыншăн та.

Чăваш Ен çĕршыври спортпа питĕ çывăх регионсенчен пĕри пулса тăрать. Эпир спорт инфраструктурине вĕçĕм çĕнетсе пыратпăр, массăллă спорта тата пысăк çитĕнӳсен спортне аталантарма, республика спорт резервне хатĕрлеме условисем туса паратпăр. Чăваш Республикин спорт пурнăçĕ пуян. Юлашки çулсенче ачасемпе çамрăксен, çемье, адаптивлă спорт ăнăçлă аталанаççĕ.

Пур шайри влаç органĕсен сотрудникĕсем те хăйсен тĕслĕхĕпе сывă пурнăç йĕркине çирĕплетме пулăшаççĕ. Спорта аталантарассинчи пирĕн пуçарăва республикăри чылай организаци, учреждени тата предприяти ырласа йышăнать. Сывлăх тата спорт кунĕсене, сывлăх сиплевĕн ытти мероприятийĕсене тĕрлĕ ӳсĕмри çынсем активлă хутшăнаççĕ.

Лайăх спорт базине туса хуни регионa республика, çĕршыв, тĕнче шайĕнчи ăмăртусене ăнăçлă хатĕрленсе иртерме май парать. Чăваш Ен спорт календарьне спортăн 66 тĕсĕпе пĕтĕм Раççейри 60-а яхăн, республикăри 400 физкультурăпа спорт мероприятийĕ кĕчĕ. Палăртма кăмăллă, чăваш спортсменĕсен тĕрлĕ шайри пĕлтерĕшлĕ ăмăртăвĕсенчи çĕнтерӳсем, республикăра физкультурăпа тата спортпа туслисен йышĕ вĕçĕм ӳссе пыни ĕçсене комплекслă йĕркелесе пынин кăтартăвĕ пулса тăрать.

Хамăрăн пĕрлехи ĕçе – сывă пурнăç йĕркине çирĕплетсе пырас ĕçе – тӳпе хывнăшăн пурсăра та чĕререн тав сăмахĕ калатăп, сывлăх, ăнăçу, спортра тата кулленхи пурнăçра çĕнĕ çитĕнӳсем сунатăп! «Сывă ӳт-пӳре сывă ăс-тăн» тени кашнин девизĕ пулса тăтăр!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М. ИГНАТЬЕВ.**

Интервью

# Михаил ИГНАТЬЕВ: Халăх ырлăхĕшĕн ĕçлемелле. Унтан ытла тĕллев çук

(Вĕçĕ. Пуçл. 1 - мĕш стр.)

Республикăра тасатмалли сооруженисем çĕнĕрен тăвас е киввисене тĕплĕн юсас, çӳп-çап пухмалли полигон уçас ыйтусем пур. Вĕсене эпир асрах тытатпăр, вăл проблемăсене шута илетпĕр, татма тăрăшатпăр.

Юлашки çулсенче халăхăн культура шайĕ ӳсни сисĕнет. 5–10 çул каяллахипе танлаштарсан çынсем тирпейлĕ пурăнасшăн, хăйсем пурăнакан вырăна таса тытасшăн, çын ĕçне сума сăваççĕ.

**– Экологи темине пуçартăмăр та, Раççейре çак енĕпе çыхăннă наци проектне хатĕрлеççĕ, унăн çум программисенчен пĕри шывпа çыхăннă. Чăваш Енĕн кăнтăр районĕсенче ĕçмелли паха шыв çук. Çав ыйту татăлĕ-ши?**

– Темиçе çул каялла «Таса шыв» федераци программине йышăннăччĕ. Укçа çитсе пыманнине кура ăна пăрахăçларĕç. Халăха таса шывпа тивĕçтерес ыйтăва Вăрнар тата Йĕпреç районĕсенче татма май килчĕ. Паянхи куна Шăмăршă, Патăрьел районĕсем тата Комсомольски районĕн кăнтăр пайĕ тăрса юлчĕ. Республика нухрачĕпе кăна эпир ку ыйтăва татаймăпăр – федераци программисене лекмелле. Çĕршыв шайĕнче халĕ «Ĕçмелли шыв» программа хатĕрлеççĕ. Ăна йышăнсан эпир те çавăнпа туллин усă курасшăн.

Шыв пирки калаçнă май уншăн тӳлессине те халăхпа сӳтсе явмалла. Ĕçмелли шывпах пахча шăварни вăрттăнлăх мар. Çав вăхăтрах шывшăн укçа тӳлемелле. Лавккара савăтпа туянакан таса шывпа йăран шăвармастпăр-çке, уйрăм хушма хуçалăх тытакансен те ĕçмелли шывпа тĕлли-паллисĕр усă курмалла мар. Шыв та – пирĕн пуянлăх. Çакна халăха ăнлантарса памалла.

**– Ял çыннисен чунне вĕçĕм ыраттаракан ыйту – халăхран пухакан сĕт хакĕ пĕчĕкки…**

– Çапла, ку ыйту яланхи. Çуллахи вăхăтра сĕт хакĕ чакать. Ĕне выльăх тытакансемшĕн 2017 çул ăнăçлă пулнăччĕ. Халĕ хак унччченхинчен 30 процент йӳнĕрех. Ял çыннине пирĕн, патшалăхăн, пулăшма тăрăшмалла. Çав вăхăтрах сĕт сутакансен паха продукципе тивĕçтермелле. Паха сĕтĕн пĕр литр хакĕ 3–5 тенкĕ пысăкрах. Халăхран пухакан сĕтĕн 90 процентчĕ – пĕрремĕш сортлă. Теприсем хăймине сепараторпа илсе юлаççĕ. Паха сĕте çусăррипе хутăштарсан вăл ăçтан пысăк пахалăхпа сутăнайтăр? Апла пулсан ял çыннисен çакна шута илмеллех.

Шупашкар хулинчи сĕт-çу завочĕ тата «АККОНДСĔТ» çĕнĕ инвестпроектсене хута ярассипе ĕçлеççĕ. Сĕт туса илекенсемпе ăна тирпейлекенсем хушшинче чылай вăхăтлăх килĕшӳсем туса хакне малтанах палăртма шухăшлатпăр. Халăхран пухакан сĕт хакĕ çавна май малашне хăпарасса шанатпăр.

**– Чăваш Республики хăмла ӳстерекен регион пек палăрса тăрать…**

– Хăмла туса илесси – тупăшлă отрасль. Çак культурăн 1 килограмм сутлăх хакĕ ăна туса илнин тăкакне ытлашшипех саплаштарать. Чăваш хăмли пахине сăра вĕретекен заводсем пĕлеççĕ. Çакăнта хăмла ӳстерекенсен тата ăна тирпейлекенсен Раççей шайĕнчи канашлăвĕсене пирĕн республикăра ирттерни те витĕм кӳчĕ. Хăмла лаптăкне епле шайра тытса пырасси ăна ӳстерекенсенчен килет. Ял хуçалăхĕнче ĕçлекенсем вăл е ку отрасль тупăшлăраххине шута илеççĕ-çке. Уйрăм предприяти-организаци ĕçне эпир, влаç органĕсем, витĕм кӳреймĕпĕр. Пирĕн тĕллев – вĕсене аталанма пулăшасси. Хăмла ӳстерекенсене, акă, бюджетран субсиди уйăратпăр.

**– Ял хуçалăх тĕллевĕллĕ, анчах усă курман çĕрсене муниципалитет харпăрлăхне куçарассипе юлашки вăхăтра нумай ĕçленĕ. Муниципалитетсем çав пуянлăхпа мĕн валли усă кураççĕ?**

– Пай çĕрĕсемпе уйрăлса тухсан çынсен пĕр пайĕ унпа мĕнле усă курмаллине пĕлмерĕ. Пĕрисем хыт хура алхастарчĕç, теприсем арендăна пачĕç. Çĕрпе тĕллевне кура усă курмалла. Ял хуçалăх çĕрĕсем çинче тыр-пул акса-туса илмелле, выльăх-чĕрлĕх валли апат-çимĕç хатĕрлемелле. Çĕрпе çыхăннă саккуна улшăну кĕртнĕ хыççăн вырăнти ял хуçалăх тата хресчен-фермер хуçалăхĕсем валли те çул уçăлчĕ – муниципалитет харпăрлăхне куçарнă усă курман çĕр çинче вĕсем ĕçлеме пултараççĕ.

Хуçасăр пурлăх пирки влаç органĕсене çынсем систерччĕр тесе халăх инвентаризацийĕ пуçартăмăр. Çĕр пирки çеç мар, усă курман хуралтăсемпе çуртсем пирки те пĕлтереççĕ. Асăннă пурлăхпа муниципалитетсен вĕçне-хĕрне тухмалла: е сӳтмелле, е арендăна памалла. Юхăнтарса лартни килĕшӳсĕр.

**– Усă курман çĕрсем çĕршывăн тĕп регионĕнче нумай. Унта çул хĕррипе сиенлĕ пултăран ӳсет. Мускав облаçĕнчи ĕçтешĕмĕрсем пултăрана кĕçех герба вырнаçтарĕç тесе шӳтлеççĕ.**

– Эпĕ çын пахчине чул пересшĕн мар. Татса памалли ыйтăвĕ хамăрăн та пур. Çул-йĕр организацийĕсене çул хĕррисене тытса тăма бюджетран укçа уйăратпăр. Вăл сиенлĕ пултăрана пĕтерме те каять. Ашкăрса кайсан ăна çулнипе çеç çĕнтерейĕмĕн – химикат кирлĕ. Бюджетран укçа уйăрнин виçине тишкернĕ тăрăх, сиенлĕ çав культурăна эпир пĕр пилĕк çулта çĕнмелле.

**– Республикăна инвесторсем хывакан укçа-тенкĕ виçи сире тивĕçтерет-и?**

– Пирĕн патра вун-вун инвестпроект çулсерен пурнăçа кĕрет. Чăваш Енĕн стратегиллĕ аталанăвĕ çинчен калакан программăра та инвестици портфельне пăхса хăварнă. Анчах та палăртасси – пĕрре, пурнăçа кĕртесси – тепре. Хăшĕсем тĕрлĕ проект пирки ĕмĕтленеççĕ, анчах пурнăçлама укçатенкĕ е хал çитсе пыраймасть.

Паянхи кун пирĕн республикăра 150 ытла инвестици проекчĕ пурнăçланать. 2017 çултан ку çула 320 миллиард тенкĕ ытлалăх куçрĕ. Ют çĕршывран килекен продукци вырăнне хамăр патра кăларассипе кăна пирĕн 45 миллиард тенкĕлĕх 70 проект пурнăçланать.

Пирĕн продукци республика тата çĕршыв тулашне каять. Çак енĕпе электротехника кластерĕн предприятийĕсем, «АККОНД» кондитер фабрики, хими промышленноçĕ питĕ лайăх ĕçлеççĕ.

Пирĕн тĕллев – апат-çимĕçпе экспорта тухасси. Кăçал пирĕн хуçалăхсем çу йышши культурăсене унччченхинчен самай ытларах акса хăварчĕç. Ку культура тупăш кӳрет пулсан вĕсене пирĕн тимлĕхсĕр хăвармалла мар. Экспорта каякан продукци кăларакансене эпир те пулăшма тăрăшатпăр.

Инвестпортфель виçипе кăмăллă та, кăмăлсăр та. Инновациллĕ проектсем пурнăçланакан çĕрте ĕç укçи республикăри вăтам шалуран 1,5–2 хут пысăкрах. Тивĕçлĕ пĕлӳ тата паха опыт пур специалистсене 30 пин тенкĕрен кая мар тӳлеççĕ, 50–70 пин тенкĕ ĕçлесе илекенсем те пур. Пирĕн тĕллев – республикăпа вăтамран çав шая тухасси. Анчах пĕр кунра мар. Ун валли темиçе çул кирлĕ. Коммерци организацийĕсене аталанма май паратпăр, хăйсен ĕçне йĕркелеме вĕрентессине шкул тенкелĕнченех пуçлатпăр: ятарлă уроксем ирттеретпĕр, «çавра сĕтелсем»…

**– Халăха кайăк-кĕшĕк грипĕ хытах сисчĕвлентерчĕ. Йӳнĕ продукци туянма хăтланса паха марри лекме пултарнине çынсене епле ăнлантармалла?**

– Чирлĕ чăх-чĕпе темиçе усламçă Чулхула облаçĕнче туяннă. Чăх-чĕпсĕр юлнисене халĕ республика бюджетĕнчен саплаштаратпăр. Халăха пирĕн пулăшмаллах, ахальлĕн çынсем чирлĕ кайăк-кĕшĕке пытарма пуçлĕç. Тăкаксене саплаштарма икĕ миллиона яхăн тенкĕ кирлĕ пулчĕ. Чи пахи – чире сарăлма май паманни. Лару-тăрăва ветеринарсемпе пĕрле сăнаса тăратпăр.

Кайăк-кĕшĕк фабрикисем паян хупă режимпа ĕçлеççĕ. Çав шутра – «Чăваш бройлерĕ» те. Унта 300 пин чăх-чĕп пур. Унăн çĕнĕ хуçи фабрикăна ĕçлеттерсе ячĕ. Кайăк-кĕшĕк продукцине туса илекенсемшĕн паян ырă вăхăт – бройлер какайĕ кăçалхи çу–çĕртме уйăхĕсенчинчен 30 процент хаклăрах. Тавар туянакана ку савăнтарманнине ăнланма пулать-ха, анчах сутакансемшĕн аван.

**– Темиçе çул каялла Шупашкарта суту-илӳ лавккисем пĕрин хыççăн тепри уçăлатчĕç. Халĕ суту-илӳ центрĕсенче «Лаптăксене арендăна паратпăр» йышши пĕлтерӳсем асăрхама пулать. Усламçăсем суту-илĕве пăрахса производство уçаççĕ тенипе эсир килĕшетĕр-и?**

– Пĕр-пĕр ĕç пуçарас текенсене эпир хапăл тăватпăр, вĕсем валли услови йĕркелетпĕр.

Туса илесси – пĕрре, сутасси – тепре. Çавăнпа кунта хупă цикл пулсан лайăх: продукцие туса кăларакан ăна хăех сутни тупăш ытларах кӳрет.

**– Шупашкарта нумай хваттерлĕ пĕр çуртпа юнашарах тепри хĕсĕнсе хăпарса ларакан вырăнсем пур. Çавăн пек застройщиксемпе мĕн тумалла?**

– Хăш-пĕр строительство организацийĕ хатĕр коммуникацисем пур вырăнта çурт-йĕр хăпартма ăнтăлать. Ун пек тăкак пĕчĕк-çке. Хăйсем вара хваттер сутнă чух йӳнĕрех ыйтмаççĕ. Çине-çине çурт хăпартнине нихăçан та ырламан, ырламастăп та.

Çурт-йĕр тăвакансем валли çĕр çителĕклех. Шупашкара ял хуçалăх тĕллевĕллĕ çĕре 2 пин гектар панă. Парксемпе кану вырăнĕсем хăвармасăр çурт-йĕр лартакан çыннăн хăй пурăнакан хулана, унти çынсене хисеплемелле. Пулас ăру умĕнчи яваплăха туйса тăмалла, таса чунлă пулмалла.

**– Ачасене шкулта чăваш чĕлхи вĕрентесси пирки мĕн шухăшлатăр?**

– Чăваш чĕлхи пулнă, пур, пулать те. Вĕренӳ çинчен калакан федераци саккунне улшăнусем кĕртнĕ хыççăн ашшĕ-амăшне тăван чĕлхене хăйсем тĕллĕн суйлама ирĕк пачĕç. Наци чĕлхисене вĕрентекенсене хавхалантарас тесе эпир вĕсене 150-шар пин тенкĕ премии пама та йышăннă. Кунта сăмах наци чĕлхипе олимпиадăсенче малти вырăнсене тухнă ачасемшĕн вĕсен вĕрентекенĕсене укçа уйăрни пирки пырать.

Юлашки çулсенче чăваш чĕлхи Шупашкарта анлă сарăлнине палăртма кăмăллă. Студент вăхăтне, иртнĕ ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсене, аса илетĕп те, ун чух хулари троллейбус-автобусра чăвашла калаçма вăтаннă, чăвашла калаçакана пĕтĕм троллейбусри халăх çаврăнса пăхатчĕ. Паян апла мар. Чăваш чĕлхине вĕрентмелле мар тесе эпĕ нихăçан та каламан. Вĕренӳ çинчен калакан федераци стандартне вара пирĕн пăхăнмаллах, унта наци чĕлхисене хĕсĕрлени çук.

**– Михаил Васильевич, кăçал Çĕрпӳ кĕперне туса пĕтерĕç-и?**

– Туса пĕтерĕç. Халĕ унта урăх организаци ĕçлет, укçатенкĕ енчен те, техника тĕлĕшпе те йывăрлăх çук.

**– Халăха калаçтаракан тепĕр ыйту – пенси саккунне улшăнусем кĕртесси…**

– Çĕршыв Президенчĕ Владимир Владимирович Путин ку ыйтăва анлă та тĕплĕн сӳтсе явнă тата халăх шухăшне тĕпе хунă хыççăн татса памалла тесе çирĕп калать. Саккуна улшăну кĕртме пурнăç хистет. Паян вăй питтисен шучĕ пенсионерсен йышĕпе шайлашса тăмасть. Ĕçлекен 6 çын пуçне тивĕçлĕ канури 5 çын тивет. Иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче демографи лару-тăрăвĕ япăх пулнăран вăй питтисен хисепĕ паян сахал. Вăрçă вăхăтĕнчи тата хыççăнхи нушана тӳснĕ ветерансене /атте-аннесене, асатте-асаннесене/ тивĕçлĕ пенси тӳлесси пирки те пирĕн, вăй питтисен, шухăшламаллах.

Чăваш Ен пенси тӳлеме федераци бюджетĕнчен яланах дотаци илнĕ. РФ Пенси фончĕн Чăваш Енри уйрăмĕ пĕлтернĕ тăрăх, пенси тӳлеме çулталăкне пирĕн республикăна 62 млрд тенкĕне яхăн кирлĕ. 2018 çулта пенсин страховани пайне 57 млрд тенкĕ ямалла. Республикăри предприяти-организацирен, налукçăсем шутланă тăрăх, страховани взносĕ 20 млрд тенкĕ куçĕ. Тепĕр майлă каласан, тепĕр 37 млрд тенкине федераци бюджетĕнчен трансферт евĕр куçарса параççĕ.

**– Хальхи вăхăтра ялсенче çĕнĕ клубсем çĕкленеççĕ. Çав вăхăтрах халăха культурăпа çывăхлатма тивĕçлĕ кадрсем çитмеççĕ.**

– Ялсенчи клубсенче ятарлă пĕлӳ илнĕ специалистсем çеç ĕçлени нихăçан та пулман. Çав вăхăтрах эпир культура институтне, ăна хупмалла текенсем пуррине пăхмасăрах, упраса хăвартăмăр. Культура отраслĕнче ĕçлеме ятарлă пĕлӳ паракан ытти учреждени те пур. Унта тăрăшакансен шалăвĕ маларах 6–7 пин тенкĕпе танлашнă пулсан, халĕ палăрмаллах ӳснĕ.

**– Чăваш Ен туристсене илĕртмелли региона çаврăнтăр тесен мĕн тумалла?**

– Совет самани вăхăтĕнче те шалти туризм пирки калаçнă-ха. Анчах ун чух ытла та ансат пулнă. Ялти туризма аталантарма газ та, çулсем те пулман. Паян – урăх самана. Туристсене илĕртме пултарнине вĕсен хăлхине кĕмелĕх сармалла.

Чăваш Ен паха хăмла туса илме пĕлет. Германире, ав, сăра фестивалĕ мĕн тери çӳллĕ шайра иртет. Унта таçти çĕршывран та пухăнаççĕ. Чăваш сăрине мĕншĕн çапла сарас мар? Ăна тутлă вĕретме мĕн авалтан пĕлнĕ.

Туризм аталанăвне усламçăсем укçа хывни кирлĕ. Укçа хывнисĕр пуçне туристсем Чăваш Ене килччĕр тесе тăрăшни. Кунта вара пурте пĕлтерĕшлĕ: хăнасене мĕнле кĕтсе илсе мĕнле пăхни те, хаксем те.

**– Тутарстан ертӳçине Рустам Минниханова Сапантуйра эсир юлташ тенĕччĕ. Чăннипех çапла-и?**

– Çапла. Темиçе çул каялла федерацин Атăлçи регионĕсен пуçлăхĕсене ылмаштарнă хыççăн вĕсен пуçлăхĕсемпе эпир килĕштерсе ĕçлеме калаçса татăлнăччĕ. Чăваш Ен ертӳçине лартсан чи малтан эпĕ Тутарстана кайнăччĕ. Тутарстанра чăвашсем йышлă пурăнаççĕ, Чăваш Енре – тутарсем. Ку ятарласа тунă пулăм мар. Хăй еккипе пулса пырать. Тутарстана хисеплетĕп, Тутарстан та Чăваш Ене хисеплет.

**– Сирĕн Инстаграмра хăвăр страница. Мĕн парать вăл сире?**

– Инстаграмра эпĕ вĕçĕм пулаймастăп. Анчах пĕр-пĕр çивĕч темăпа ăнлантарса памалли тупăнсан асăннă ушкăн урлă хаваспах хыпарлатăп.

**– Эсир час-часах велосипедпа çӳретĕр. Машина рулĕ умне ларатăр-и?**

– Вырсарникун çеç.

**– Михаил Васильевич, ялан халăхпа, халăх çинче пулнине кура темле хаклакан-калаçакан та пулма пултарать. Сире хурланине, тепĕр чухне вараласа сăмах сарнине çемйĕр епле йышăнать? Ĕç графикĕ туллине кура çемйĕр валли вăхăт тупăнать-и? Калăпăр, пулăшма…**

– Çемье те, çывăх çыннăмсем те пустуй калаçакансен сăмахне ăша хывман та, хывмĕç те. Пур сăмаха çывăха илмелле мар.

Çемье валли вăхăт чăнахах та питĕ сахал. Вырсарникунсерен эпĕ килтисем валли мĕн те пулин тутлине пĕçерме тăрăшатăп. Юратсах çиеççĕ. Тем тĕрлĕ апат та хатĕрлетĕп. Йăлтах – хамăр хушма хуçалăхра туса илнĕ апат-çимĕçрен. Хамăр пахчара тахçанах хăяр, помидор пулса çитнĕ. Эпĕ курăк çулма кăмăллатăп. Ку енĕпе ывăлăм та пулăшать. Ялта атте-аннерен юлнă çурт пур – ăна тытса тăмалла. Пăхса тăман çурт хăвăрт юхăнать. Чалăшнă юпана çийĕнчех ылмаштарма вĕрентнĕ атте-анне. Вĕсен сăмахне асра тытатăп.

**– Хăçан тата ăçта канма ĕмĕтленетĕр?**

– Хуçалăх ертӳçинче ĕçленĕ вăхăтран пуçласах эпĕ çулла канса курман. Халĕ те çаплах. Канма хамăр çĕршывра кăмăллатăп. Кану вăхăтне хамшăн çеç илмелле мар-çке. Çемьепе пулма, пĕрле канма. Ирпе ирех ĕçе тухса кайса каçхине кая юлса килсе ывăннă хыççăн вăй пухма кану кирлĕ.

**– Республика ертӳçинче эсир чылай çул ĕçлетĕр. Яваплă çак должноçри тĕп тĕллеве мĕнре куратăр?**

– Халăхăн пурнăç ырлăхĕшĕн ĕçлемелле. Пирĕн унтан ытла тĕллев çук.

«Хыпар» хаçатран.

Августăн 12-мĕшĕ – Строитель кунĕ

# Строительствăсăр малашлăх çук

**Строитель – çĕр çинчи чи мирлĕ професси çынни. Строительствăсăр малашлăх та çук. Мĕншĕн тесен ялсенче тата хуласенче пурăнмалли капмар хăтлă çуртсем çĕкленмеççĕ, çĕнĕ производство, культура, йăла, сывлăх сыхлавĕн, вĕренӳ объекчĕсем хута каймаççĕ пулсан, пурăнан пурнăçăн малашлăхĕ те пулаймасть. Этемлĕх аталанăвне те ытларах чухне строительство отраслĕн ӳсĕмĕсене кура хак параççĕ.**

**Пирĕн районта строительство отраслĕ яланах пысăк тимлĕхре. Строитель кунĕ умĕн район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕпе – капиталлă строительство тата общество инфраструктурине аталантарассин пайĕн пуçлăхĕпе Алексей МАТРОСОВПА тĕл пулнă май районта çак вăхăта строительство ĕçĕсем мĕнле пынипе паллаштарма ыйтрăм:**

– Çул-йĕр строительстви çинче уйрăммăн чарăнса тăрас килет. Мĕншĕн тесен çулсене юсассипе тата тăвассипе, реконструкцилессипе тата тытса тăрассипе кăçал нихăçанхинчен те калăпăшларах ĕçсем туса ирттеретпĕр. Районăн тата ял тăрăхĕсен çул-йĕр фончĕ кăçал 48 млн ытла тенкĕпе танлашрĕ. Июль уйăхĕ тĕлне ĕçсене 20 млн тенкĕлĕх ытла пурнăçласа плана 42 процент тултартăмăр.

Çулсене тытса тăма, юсама тата тĕпрен юсама, автопавильонсем тума, пурте усă куракан автомобиль çулĕсене тăвассипе проект ĕçĕсене туса ирттерме район укçи-тенкине 33 млн çурă ытла тенкĕ уйăрма пăхса хунăччĕ. Палăртнă ĕçсене çуррине яхăн пурнăçлама ĕлкĕртĕмĕр ĕнтĕ. Ял тăрăхĕсемпе ку сумма 14 млн тенкĕ ытла. Вăл шутра 35 процентĕпе усă курнă ĕнтĕ.

Ильинка ял тăрăхĕнчи Тренкăри Новая урамри 4-мĕш номерлĕ нумай хваттерлĕ çуртăн картиш территорине тĕпрен юсама çур миллион тенкĕ ытла уйăрма палăртнă. Вăл шутран 90 процентне е 469 пин тенкине республика уйăрать. Çавăн пекех район уйăрнă 9,3 млн тенкĕ укçапа тротуарсене юсатпăр, барьер чиккĕлевĕсене вырнаçтаратпăр, автобус чарăнмалли вырăнсемпе павильонсене йĕркене кĕртетпĕр.

Республика федерацин «Хăрушлăхсăр тата пахалăхлă çул-йĕр» программине кĕнĕ май, Шупашкар агломерацийĕн шайĕнче хамăр енре район çулĕсене юсассипе калăпăшлă ĕçсем туса ирттеретпĕр. Пĕтĕмпе 4 объектра 24 километра яхăн çулсене юсаса çĕнĕ сăн кĕртетпĕр, çул çӳрессине хăрушсăртарах тăватпăр. Программăн пĕрремĕш тапхăрĕнче çав тĕллевпе пĕтĕмпе 110 млн тенкĕне яхăн уйăраççĕ.

«Волга – Шомик» çула 6,4 километр юсаса пĕтеретпĕр. Çавна валли 30 млн тенкĕне яхăн уйăрнă. Вăл шутран федераци бюджетĕнчен – 14 млн тенкĕне яхăн, республика бюджетĕнчен – 12 млн тенкĕ патнелле, вырăнти бюджетран – 2,9 млн тенкĕ ытла. Ĕçсене «ТУС» акционер обществи пурнăçлать.

Асăннă организаци 6,9 километр тăршшĕ «Мăн Сĕнтĕр – Мăн Хураçка – Ишмула» çула юсассипе те ĕçлет. Çула юсама 32 млн тенкĕ ытла уйăрнă. Çуррине федераци, 12,8 млн тенкĕ республика тата 3 млн тенкĕ ытла район уйăраççĕ.

Федераци программипе районта татах икĕ çула юсатпăр. Ку объектсенче «СМУ» ООО строителĕсем вăй хураççĕ. 9 километр тăршшĕ «Муркаш – Хорнуй – Платкасси» çула юсама 40 млн çурă ытла тенкĕ уйăратпăр. Вăл шутран çуррине – федераци, ытти – республика тата район.

1,6 километра яхăн «Тойкилтĕ – Кĕртекасси» çула юсама 7 млн тенкĕ ытла уйăрма пăхнă. Кирлĕ суммăран çуррине федераци парать, 2,8 млн тенкĕ ытла – республика, 715 пин тенкĕ ытла – район бюджетĕнчен.

Федерацин «Хăрушлăхсăр тата пахалăхлă çул-йĕр» программи шайĕнче районта 2018 çулта туса ирттерекен юсав ĕçĕсем пирки пĕтĕмĕшле калас пулсан, ĕçсене çак вăхăта 89 млн тенкĕлĕхе яхăн пурнăçлама май килчĕ. Ку вăл çулталăк планĕпе пăхнин 81 проценчĕ пулать. Сывăх вăхăтрах ĕçсене 100 проценчĕпех пурнăçлама майсем çитеççĕ.

Çынсен пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсем лайăхланса пыни куçкĕрет. Кăçалхи январь – июль уйăхĕсенче кăна уйрăм çынсем валли пурăнмалли çурт-йĕр 8 пине яхăн тăваткал метр хута янă. Ку тĕлĕшпе патшалăх пулăшăвĕ те курăмлă. Район тĕрлĕ программăна хутшăннă май çамрăк çемьесем, ялти специалистсем укçа-тенкĕ пулăшăвĕпе усă курса хăйсен пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма пултараççĕ. Çапла вара кăçал кăна 31 çамрăк çемье 21 млн тенкĕлĕх ытла пулăшăва тивĕçĕ.




*Чăваш Республикин «Развитие образования» патшалăх программи шайĕнче çак вăхăта Шомикри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта капиталлă юсав ĕçĕсем пыраççĕ. Ĕçсене «Торгово-промышленная компания «ПремьеР» ООО строителĕсем пурнăçлаççĕ. Строительсем ĕçсене çывăх вăхăтрах вĕçлеме шантараççĕ. Апла пулсан кăçал Шомик шкулĕнче вĕренекенсем çĕнĕ вĕренӳ çулне сăн-сăпатне тĕпрен çĕнетсе улăштарнă шкулта пуçлĕç. Александр Мазуровпа Павел Алексеев юсавçă-строительсем ачасем шкулта хăйсене килти пекех хăтлă туйччăр тесе тăрăшаççĕ.*

Нумай хваттерлĕ çуртсене юсассипе республика программи япăх мар пурнăçланать. Унпа килĕшӳллĕн кăçал пирĕн районта нумай хваттерлĕ 8 çуртра юсав ĕçĕсем туса ирттерме пăхнă. Ĕçсене пĕтĕмĕшле 7,7 млн тенкĕлĕх ытла пурнăçламалла. Коммерциллĕ мар «Фонд капитального ремонта» организаци нумай хваттерлĕ 4 çуртра юсав ĕçĕсем туса ирттерессипе аукционсем ирттерсе подряд организацийĕсемпе килĕшӳсем тунă ĕнтĕ. Пĕтĕмĕшле 2,1 млн тенкĕлĕх ытла. Ытти çурт-йĕрте юсав ĕçĕсем ирттерме проектпа смета, аукцион документацийĕсене хатĕрлессипе ĕçлеççĕ.

Ильинка ял тăрăхĕн территорийĕнче Апчар ялĕнче пурăнакансене ĕçмелли шывпа тивĕçтерессипе ĕçсем пуçăнчĕç. Май уйăхĕн вĕçĕнче Апчар ялĕнче шывпа тивĕçтермелли объекта тăвассипе аукцион ирттертĕмĕр. Подрядчик – «СК – Лерон» ООО контрактпа пăхнă ĕçсене 5 млн çурă тенкĕлĕхе яхăн пурнăçлĕ. Кирлĕ укçа-тенкĕн ытларах пайне – 4 млн та 970 пин тенкĕ – федераци уйăрать, ыттине – республика тата Ильинка ял тăрăхĕ. Ĕçсене октябрь уйăхне кĕриччен вĕçлеме палăртатпăр.

Калăпăшлă строительство ĕçĕсем Юнкă шкулĕнче саралнă. Кунта «ПСК «Империя» ООО Юнкă вăтам шкулĕн çĕнĕ спортзалне тăвать. Ĕçсене пĕтĕмĕшле 21 млн та 561 пин тенкĕлĕх туса ирттерес пулать. Çак вăхăта строительсем çуртăн стенисене купаласа çине бетон плитасемпе витсе пĕтереççĕ.

Пуçарулăх бюджечĕн проектне район активлă хутшăнать. 16 ял тăрăхĕн 19 проекчĕ конкурс витĕр тухма пултарчĕ. 1-мĕш тапхăрпа район территорийĕнче 14 проект пĕтĕмĕшле 7 млн та 132 пин тенкĕлĕх пурнăçа кĕрет. 2-мĕш тапхăрпа татах тепĕр 5 проекта пурнăçа кĕртме пăхнă. Хакĕ 2,3 млн тенкĕлĕх. Асăннă проектсене пурнăçа кĕртме ял çыннисем пĕтĕмпе 2,5 млн тенкĕ ытла пухса панă. 19 проектран 14-шĕ – ял çулĕсене юсассипе, 5-шĕ – ача-пăча площадкисене йĕркелессипе. Паянхи куна 8 проекта пурнăçа кĕртнĕ те ĕнтĕ.

Пурте пĕлетпĕр: ялсенче çĕнĕ çуртсем çĕкленеççĕ, çĕнĕ çемьесем чăмăртанаççĕ, çемьесенче ача-пăча çуралать пулсан, ялсем те, район та малалла аталанать. Ахальтен мар ĕнтĕ районта кирек хăш вăхăтра та строительство отраслĕ тĕп вырăнта. Строитель вара – чи мирлĕ те кирлĕ професси. Çавăнпа та чи малтанах çак специальноçа суйласа илнисене, хăйсен ĕç ĕмĕрне хисеплĕ çак специальноçпа çыхăнтарнисене çитсе килекен уявпа саламланă май чĕререн тухакан тав сăмахĕ калатăп, кулленхи ĕçре ăнăçу кăна сунатăп. Малашне те эсир пурнăçлакан ĕç яланах хисепре пултăр, çынсен тав сăмахĕ сире лайăх кăмăл парнелетĕр. Тĕрĕссипе хальхи вăхăтра ялта пурăнакан кашни арçын ку е вăл майпа строительство ĕçĕпе çыхăннă. Уйрăмах пирĕн чăваш ялĕсенче. Апла пулсан вĕсене те çитсе килекен уявпа саламласа тав сăмахĕ калатăп.



*Район администрацийĕн капиталлă строительство тата общество инфраструктурине аталантарассин пайĕн коллективĕ: тĕп эксперт специалисчĕ А. Михайлов, ертсе пыракан эксперт специалисчĕ И. Иванова, тĕп эксперт специалисчĕ А. Иванова, пай пуçлăхĕн çумĕ О. Валежникова, пай пуçлăхĕ – район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ А. Матросов. Районти строительство ĕçĕсен аталанăвĕ вĕсен тăрăшулăхĕпе тӳрремĕнех çыхăннă.*

**Муркаш районĕнчи строительство отраслĕн хисеплĕ ĕçченĕсем тата ветеранĕсем!**

Сире Строитель кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр!

Сирĕн çăмăл мар тата пархатарлă ĕçĕр яланах хисеплĕ тата пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнă. Çĕршывра пурăнакансен ырлăхĕ шăпах строительсен ĕç пахалăхĕнчен нумай килет.

Пархатарлă çак професси представителĕсен ăсталăхĕ, пултарулăхĕ пулăшнипе архитектура стилĕсен чи лайăх тĕслĕхĕсем тӳрре тухаççĕ, эпир вĕсене хаклама тата упрама тивĕç.

Чăваш Ен кашни çын пусне пурăнмалли çурт-йĕр хута ярас енĕпе çĕршывра лидер шутланать. Республикăра çавăн пекех культура, сывлăх сыхлавĕн учрежденийĕсем, спорт объекчĕсем, ача сачĕсемпе шкулсем тăваççĕ, вĕсене реконструкцилеççĕ. Ку енепĕ хамăр районта та сахал мар ĕçсем тăватпăр.

Строительсен паянхи тĕп тĕллевĕсенчен пĕри – пысăк пĕлтерĕшлĕ «Туянма май пур тата хăтлă çурт-йĕр – Раççей гражданĕсене» наци проектне пурнăçласа пурăнмалли çурт-йĕр ыйтăвĕсене татса парасси.

Тĕллеве пурнăçлассишĕн çине тăни, ырми-канми ĕçлени тата суйласа илнĕ профессие парăнни чи хăюллă тата хăйне евĕрлĕ проектсене тӳрре кăларма май парасси пирки иккĕленместпĕр. Сирĕн мĕнпур тĕллевĕр пурнăçа кĕтĕр. Строительсене çирĕп сывлăх, телей, ырлăх, иксĕлми вăйхăват, çĕкленӳллĕ кăмăл-туйăм сунатпăр!

**Район пуçлăхĕ – депутатсен район**
**Пухăвĕн председателĕ**
**И. НИКОЛАЕВ.**
**Район администрацийĕн пуçлăхĕ**
**Р. ТИМОФЕЕВ.**

## Саламлатпăр



Турай ялĕнче пурăнакан **Александра Кирилловна ЛУКИНАНА** çуралнă кунĕ ячĕпе чун-чĕререн, ăшшăн саламлатпăр. Кил ăшшине упраса пурăннăшăн пуç тайса тав тăватпăр.

Пурнăçра мĕн ырри, лайăххи пурте пултăр сан валли, ырлăхпа, пурлăхпа савăнса та хавхаланса пурăнма хурçă пек çирĕп сывлăх, ĕмĕр тăршшĕ Атăл пек вăрăм пултăр. Кун-çулу пархатарлă та тикĕс килтĕр. Çын хушшинчи хисепӳ ан иксĕлтĕр, сăн питӳнте йăл кулă çиçтĕр, çуталчăр телейпе сан куçусем. Чуну яланах вун çиччĕри пек пултăр. Ачусен, мăнукусен, кĕçĕн мăнукусен çитĕнĕвĕсемпе савăнса, вĕсен тимлĕхне, юратăвне туйса нумай-нумай çул пире савăнтарса пурăн.

**Саламлаканĕсем: Петровсем, Лукинсем, Клементьевсем, Сидоровсем, Калининсем, Ивановсем, Павловсем, Стрелковсем, Кирилловсем, Архиповсем, Владимировсем, Сергеевсем, Семеновсем, Степановсем, Юдинсем, кӳршисем, тăхлачисем, хăтисем, ял-йыш.**



Хисеплĕ те хаклă çыннăмăра, мăшăра, аннене, кукамая – Юнкă ялĕнче пурăнакан **Валерия Львовна ЯРГУНЬКИНĂНА** 60 çулхи юбилей ячĕпе чунтан тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, тапса тăракан çăлкуç пек иксĕлми вăй-хал, тумхахсăр кун-çул, телей сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, икĕ хĕрĕпе кĕрӳшĕ, виçĕ мăнукĕ, тăванĕсем.**



Хаклăран та хаклă çыннăмăра, юратнă аннене, тараватлă хунямана, асаннене – Москакасси ялĕнче пурăнакан **Людмила Самуиловна ИВАНОВĂНА** сумлă юбилей ячĕпе чунчĕререн, ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, вăрăм кун-çул сунатпăр. Эпир сана юрататпăр, санпа мухтанатпăр, сана хисеплесе çĕре çити пуç таятпăр.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, ывăлĕпе кинĕ, мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем.**

Пирĕн хаклă çыннăмăра – Кашмаш ялĕнче пурăнакан **Августина Кирилловна НОДЫКОВĂНА** 70 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, телей сунатпăр. Турри сана тата нумай çул усратăр, вăй-хал парса тăтăр.

**Саламлаканĕсем: тăванĕсем.**

**Райпо уявĕнчен**

# Халăхпа пĕрле – малашлăх ĕмĕтпе

Мăн Сĕнтĕр райповĕн мал туртăмлăхĕпе, унта ĕçлекенсен тăрăшулăхĕпе çывăхарах паллашатăп та, вĕсен ĕçĕ-хĕлĕ ăнăçлă та ӳсĕмлĕ пулса пынишĕн ыттисемпе пĕрле савăнатăп. Асăннă райпо коллективĕ çурла уйăхĕн 3-мĕшĕнче 8-мĕш хут ырă йăлана кĕнĕ райпо кунне ирттерчĕ. Ăна вăл хăйĕн пайщикĕсене, райпо пулăшăвĕпе анлă усă куракансене, райпопа тачă çыхăну тытса ĕçлекенсене парнелерĕ. Пысăк уява кунти ĕç коллективĕ çулленхи пекех тĕплĕ хатĕрленсе кĕтсе илчĕ.



**Район администрацийĕн пуçлăхĕпе Р. Тимофеевпа ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ тата Чăвашпотребсоюз канашĕн председателĕ В. Павлов Мăн Сĕнтĕр райповĕн уявĕнче.**

Ыранхи кун аталанăвĕ хамăр туса ирттернине епле пĕтĕмлетнинчен, умри ĕç-хĕл çине эпир паян мĕнле пăхнинчен, тĕллевĕмĕрсене татса парассипе çак самантра епле тимленинчен пуçланать.

Паян ялта пурăнакан нумай çын килти хушма хуçалăха аталантарса çемье бюджетне пуянлатассишĕн тăрăшать. Ку ĕçре вара хушма хуçалăха аталантарма пулăшу паракапа килĕшӳ тупасси, туса илнĕ продукцие тухăçлă сутасси пĕлтерĕшлĕ. Çакна ялта пурăнакан кашни çын лайăх ăнланать. Халĕ каланине витĕр курса тăрса Мăн Сĕнтĕр райповĕ хăйĕн кулленхи ĕçĕнче ял çыннисемпе тачă çыхăну тытассине малта тытса пырать.

Кăçал Чăваш Республикинчи потребительсен кооперацийĕ йĕркеленнĕренпе 125 çул çитнине уявланипе пĕрлех мăнсĕнтĕрсем хăйсен 105 çулхи юбилейне те халăхпа пĕр йыша пухăнса чаплă лару-тăрура сумлăн паллă турĕç, райпо аталанăвне пысăк тӳпе хывакансене чысларĕç.

Пысăк уяв ачасен вăйă картинчен пуçланчĕ. Ашшĕ-амăшĕпе пынă ача-пăча артистсемпе ăмăртмалла вылярĕ, юрларĕ, ташларĕ, пысăк уява çул уçса пачĕ. Савăнăç хĕрсе пынă май «Шуçăм» кафе умĕнчи илемлĕ лаптăка халăх лăках тулчĕ. Вĕсене тивĕçтерме йĕри-тавра суту-илӳ пырать, савăк юрă-кĕвĕ янăрать, пĕр-пĕрне ырă сунса шӳтлени, кăмăллă аса илӳсем илтĕнеççĕ.

19 сехет тĕлне уяв сцени çине хăнасем хăпарчĕç. Савăнăçлă каçа Мăн Сĕнтĕр райпо канашĕн ертӳçи Л. Майкова уçрĕ. Уява пухăннă халăха тав туса Людмила Петровна кăçалхи пĕрремĕш çур çулти ĕçĕсемпе паллаштарчĕ. Кĕскен каласан, ĕç коллективĕ 6 уйăхра иртнĕ çулхи çав вăхăтринчен начар ĕçлемен. Нумай кăтарту унчченхинчен пысăкрах. Производствăпа суту-илĕве аталантарнипе пĕрлех тĕрлĕ шайри бюджета миллионшар тенкĕ налуксем тӳлени те мăнсĕнтĕрсен ырăпа палăрнă енĕ.



**Мăн Сĕнтĕр райповĕн ĕç ветеранĕсем (сулахайран сылтăмалла): А. Хмелева, Л. Осипова, Л. Иванова, Е. Щербакова, В. Ванюшкина, Л. Замятина, Г. Иванова, М. Макарова.**

«Шуçăм» кафе умĕнчи уяв минутсерен вăй илсе пычĕ. Çак кун савăнăç шевли кашни сăн-питре вылярĕ. Пухăннисене савăнăçлă кунпа район пуçлăхĕ И. Николаев, район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ тата Чăвашпотребсоюз канашĕн председателĕ В. Павлов, Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А. Лаптев, райпопа тачă хутшăнса ĕçлекен предприятисен пуçлăхĕсем т. ыт. те саламларĕç. Умри тĕллевсене пурнăçласа Мăн Сĕнтĕр райпо коллективĕ тĕрлĕ бюджета çулсерен миллионшар тенкĕ налуксем тӳленине çиччĕ виççе пăхакансем район аталанăвне хывакан пысăк тӳпе тесе хакларĕç. «Райпо аталанать пулсан, пирĕн те çанă тавăрса ĕçлес кăмăл ӳсет, – терĕç уява тухнă мăнсĕнтĕрсем пĕр-пĕрин çине савăнăçлăн пăхса.

Район аталанăвне пысăкрах тӳпе хывса инноваци активлăхне ӳстерессипе тăрăшакан, ыранхи куна пăхса ĕçлекен кирек епле предприятин экономика аталанăвĕн никĕсĕнче те ĕç тăрать. «Пĕри – пуриншĕн, пурте – пĕриншĕн» девиз – тĕреклисен тĕллевĕ. Мăн Сĕнтĕр райповĕн 52 магазинĕпе обществăлла апатланăвăн 9 предприятийĕнче, хатĕрлев ĕçĕнче, бухгалтеринче тата автотранспортпа, хушма пулăшу ĕçĕсенче вăй хуракансен тăрăшулăхĕпе паллашатăн та асăннă девиза кашниех тĕп вырăнта тытнине асăрхатăн. Мал туртăмлă ĕçлеме тăрăшни, çĕнĕлĕхсемпе паллашса тата вĕсене çул парсах пыни, хăйсемпе ĕçлекенсене тата пайщиксене хисеплесси – райпон кулленхи ĕç йĕрки.



**Мăн Сĕнтĕр райпо канашĕн председателĕ Л. Майкова мини-футболла выляса çĕнтерне ушкăнпа.**

Унта çуллен хутшăннăран райпо ăна хăйĕн пайщикĕсем, хăйсен ĕçĕпе туллин усă куракансем, тавар туянакансем валли ирттерни маншăн паллă пулчĕ. Халĕ каланине уява килнĕ хăнасем те, курма пынисем те пĕр çын пек палăртрĕç.

– Пирĕн райпо хăйĕн ӳсĕм çулне çухатманни, вăл эпир ĕçленĕ вăхăтри пекех халăхпа тачă хутшăнура пулни пире савăнтарать. Ветерансене те манăçа хăварманран эпир райпо кунне çулленех хутшăнма тăрăшатпăр. Тавах коллектива тата унăн ертӳçине Л. Майковăна, – терĕç Мăн Сĕнтĕр райповĕнче 29 – 40 çул ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнисем.

Район пуçлăхĕ И. Николаев уяв сцени çинчен райпо хăй аталаннипе пĕрлех районти пĕрлешӳллĕ кооперативсене тата хресчен (фермер) хуçалăхĕсене пулăшассинчен пăрăнса юлманнине палăртрĕ. «Çакна тума сире çăмăл пулманнине ăнланатăп, вăхăтлă пулăшушăн чĕререн тав тăватăп. Ку хутшăну нумай çуллăха пуласса шанатăп», – терĕ вăл.

– Мăн Сĕнтĕр райповĕ районăн экономикăпа социаллă аталанăвне пысăк тӳпе хывни вăрттăнлăх мар. Çирĕп конкуренци тапхăрĕнче мал туртăмлă тата ӳсĕмлĕ ĕçлеме пултарни эсир тĕрĕс çул çинче пулнине çирĕплетет. Çакăнта эсир таварсемпе услугăсен ассортиментне ялан пысăклатса пыни, тăтăшах шыравра пулни тата çĕнĕрен çĕнĕ объектсем уçни сирĕн ĕçлеслĕхĕре уçса парать. Пысăк тав сире эсир пурнăçлакан ĕçшĕн, хăвăр суйласа илнĕ профессие юратнăшăн тата çав çулпа çирĕппĕн утнишĕн, – терĕ вĕсен шухăшне пĕлнĕ пек мăнсĕнтĕрсене савăнăçлă лару-тăрупа саламласа район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев. Ĕçре ыттисемшĕн тĕслĕх шутланакан кооператорсен пĕр ушкăнне Ростислав Николаевичпа Игорь Васильевич район администрацийĕн Хисеп грамотисемпе чысларĕç.



**Сĕнтĕрти çăкăр заводĕнче ĕçлекенсем (сулахайран сылтăмалла): С. Куликова тĕп бухгалтер, производство пуçлăхĕ Н. Шумилина, А. Шайкина бухгалтер.**

Уявра пулнă май Мăн Сĕнтĕр райпо канашĕн председателĕ Л. Майкова хăй ертсе пыракан коллектив йăлтах халăхшăн тата халăхпа пĕрле ĕçленине пытарманнине ырламалла кăна. Çак çулпа кайса юлашки çулсенче кунта тĕрлĕ тавар сутнипе пĕрлех аптека тытăмне аталантарассине, йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерессине, хатĕрлев ĕç-хĕлне пурнăçпа тан илсе пырассине, тавар туянакапа çывăхарах пулассине малти вырăна кăларчĕç. Ку тĕллевсем кĕске хушăра пурнăçламалласкерсем мар. Çавăнпа та Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ тата Чăвашпотребсоюз канашĕн председателĕ В. Павлов Мăн Сĕнтĕр райпо канашĕн председательне, Раççей Федерацийĕнчи суту-илĕвĕн тава тивĕçлĕ ĕçченне тата Чăваш Республикинчи халăх ыйтăвĕсене тивĕçтерекен сферăн тава тивĕçлĕ ĕçченне Л. Майковăна черетлĕ çитĕнӳсемпе саламларĕ. Унăн аллинчен çак кун кооператорсен пĕр ушкăнĕ Чăвашпотребсоюз правленийĕн наградисене тивĕçрĕ. Чыслав уявра нумай енлĕ пулчĕ.

– Мăнсĕнтĕрсем республикăри потребкооперацире чылай енĕпе ĕç тĕслĕхĕ пулса тăраççĕ. Нумайăшĕ вĕсен ĕçне алла илсе малалла аталанаççĕ. Ку ырă ен малашне те çаплах пултăрччĕ, – палăртрĕ Валерий Михайлович.

Хăйсен ял тăрăхĕнче вырнаçнă райпори ĕç хастарĕсене Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А. Лаптев та ăшшăн саламларĕ. Асăннă коллективăн аталану çулĕ ял тăрăхĕ çине те ырă витĕм кӳнине палăртрĕ вăл. «Эсир хăвăрăн социаллă яваплăха туйнипе ял тăрăхĕн ĕçне те çăмăллатса пыратăр, çамрăксем хушшинче сывă пурнăç йĕркине аталантарма пулăшатăр. Пысăк тав сире уншăн», – терĕ Анатолий Владимирович хăйĕн салам сăмахĕнче. Халĕ каланине çирĕплетекен тĕслĕх. Райпо кунĕнче те Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи çамрăксем мини-футболла выляса тĕп парнешĕн кĕрешрĕç. Çĕнтерӳçĕ – «Космос» команди.

Уяв райпо ĕçченĕсене çĕнĕ ӳсĕмсем сунса тата вĕсем ăна тума пултарасса шанса савăнăçлă фейерверкпа вĕçленчĕ.

Савăнăçлă уяв иртрĕ те черетлĕ ĕç кунĕ пуçланчĕ. Кунта Мăн Сĕнтĕр райпо коллективĕн ĕçлеслĕхĕ пысăккине пытармалли çук. Вĕсем ял çыннисен ыйтăвне лайăхрах шута илсе вăй хумаллине ăнланаççĕ. Çапла тусан çеç кӳрсе килнĕ тавар сентре çинче нумай выртмĕ, тавар çаврăнăш ӳсĕ, экономика тĕрекленĕ.

Пурнăç пĕр вырăнта тăмасть. Ĕçĕпе Раççейре те, республикăра та ырăпа палăракан коллектив тăтăшах шыравра. Кунти тĕллев – тавар туянаканăн ыйтăвне ăна майлă татса парасси. Çав тĕллевпе райпо тытăмĕнче тавара кредитла сутассине, ăна ял çыннисем ыйтнипе илсе килессине, тавар çаврăнăшне ытларах чухне харпăр хăй вăйĕпе туса кăларнă продукцине кĕртессине, ялсенчи магазинсемпе обществăлла апатлану предприятийĕсенче халăх ыйтăвĕсене тивĕçтерес культурăна ӳстерессине, халăха экологи тĕлĕшĕнчен таса продукципе тивĕçтерессине кун йĕркине кĕртсе пыраççĕ. Ку таранччен мĕн пурнăçланни – умри тĕллевсен никĕсĕ.

**А. БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

**Августăн 11-мĕшĕ – Физкультурник кунĕ**

# Эпир – сывă пурнăç йĕркишĕн

Спорт, физкультура пирĕн пурнăçра чăннипех те пысăк вырăн йышăнаççĕ. Çавна май сывă пурнăç йĕркине тытса пырасси кулленхи пурнăç нормине кĕрсе пырать. Çĕршыв шайĕнче çакна пысăк тимлĕх уйăрма тăрăшаççĕ.

Пирĕн районта та çак ĕç курăмлă. Яшкĕрĕме шкул çулĕсенчен тытăнса спортпа çывăх пулма майсем çителĕклĕ. Шкул спортзалĕсене илер. 2014 – 2017 çулсенче Çатракассинчи, Ярапайкассинчи, Муркашри, Москакассинчи, Мăн Сĕнтĕрти, Калайкассинчи, Ильинкăри вăтам шкулсен спортзалĕсене юсаса çĕнĕ хăт кĕртме, спорт инвентарĕпе пуянлатма май килнĕ. Кăçал кун пек юсав ĕçĕсене Йӳçкасси, Чуманкасси, Оринин шкулĕсенче туса ирттернĕ. Çавна валли 3 млн тенкĕ ытла уйăрнă. Ытларах пайне – федераци бюджетĕнчен. Юнкă шкулĕнче вара çĕнĕ спортзал кăçал хута кайĕ. Ăна тума 21 млн çурă ытла тенкĕ укçа уйăрнă.

Çуллен хальхи вăхăтра районта район тата республика шайĕнчи 60 ытла ăмăрту иртет. Физкультурăпа спорта аталантарма районти пуçаруллă çынсем хăйсем те активлă хутшăнаççĕ. «Сывлăх» физкультурăпа спорт шкулĕнчи, ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕнчи секцисене çӳресе çĕршер ача хăйсен сывлăхне çирĕплетет.



Физкультурник кунне халалласа районта ĕç çыннисен спартакиадине ирттересси йăлана кĕнĕ. Предприяти-организацисен, учрежденисен, ял тăрăхĕсен командисем тĕрлĕ енпе ăмăртса вăй виçеççĕ, командăсем, участниксем кубоксене, дипломсене, медальсене тивĕçеççĕ. Уйрăм участниксен кăтартăвĕсене вара ГТО нормативне пурнăçланин шутне кĕртеççĕ.

Кăçалхи спартакиада ăмăртăвĕсем Муркашри спорт шкулĕнче августăн 10-мĕшĕнче иртрĕç. Муркаш райповĕн команди **(сăн ӳкерчĕкре)** ытти çулсенчи пекех ăмăртусене активлă хутшăнчĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Салам**

**Хисеплĕ физкультурниксем, спортсменсем, спортпа туслă çынсем, физкультура юхăмĕн ветеранĕсем! Хаклă çыннăмăрсем!**

Сире Физкультурник кунĕ ячĕпе саламлатпăр.

Кашни çыншăн çак кун – уяв. Мĕншĕн тесен физкультурăпа спорт пире çирĕп сывлăхлă пулма, кăмăла çирĕплетме пулăшаççĕ. Сывлăхлă, çирĕп кăмăл-туйăмлă, сывă пурнăç йĕркипе пурăнакан çынсем вара кирек епле йывăрлăха та çĕнтерме пултараççĕ, умри тĕллевсене пурнăçлаççĕ, район тĕрекĕ пулса тăраççĕ. Пирĕнтен кашнинех çавăн пек пулма тăрăшмалла та. Хамăрăн ачасене те мĕн пĕчĕкрен спортпа туслă пулма вĕрентмелле пирĕн. Çакна валли районта условисем çителĕклех. Вĕсене тата та лайăхлатса пыма тăрăшатпăр: юлашки çулсенче шкулсенчи спортзалсене тĕплĕн юсама пуçларăмăр. Кăçал Чуманкасси, Йӳçкасси тата Оринин шкулĕсенче спортзалсене тĕплĕн юсарăмăр. Çавăн пекех Юнкăри вăтам шкулта çулталăк вĕçлениччен çĕнĕ спортзал хута кайĕ.

Паян çамрăксем кăна мар, аслăрах ăрури çынсем те спорт енне туртăнни чуна савăнтарать. Ялсенче хăйсен пуçарулăхĕпе тĕрлĕ волейбол, футбол площадкисем, хоккей корпуискисем туса хуни те çакнах çирĕплетет.

Эсир хăвăрăн ĕçĕре чун-чĕре хушнă пек пурнăçлани савăнтарать. Сирĕн пуçарулăхăрпа тăрăшулăхăра пулах ĕнтĕ пирĕн ентешсем республика шайĕнче çеç мар, Раççей, Европа, тĕнче шайĕнчи ăмăртусене хутшăнаççĕ. Хутшăнаççĕ çеç мар, çĕнтерӳсем туса, районăн ятне-сумне çĕклеççĕ. Тавах сире пархатарлă ĕçшĕн. Малашне те физкультурăпа спорт районта пурăнакансемшĕн кун йĕркин уйрăлми пайĕ пулса тăтăр.

Пурсăра та çирĕп сывлăх, телей, тулли кăмăл сунатпăр. Спортра малалла та ăнăçу хыççăн ăнăçу тумалла пултăр. Пурнăç çулĕ вара уçăлнăçемĕн уçăлсах пытăр.

**Район пуçлăхĕ – депутатсен район Пухăвĕн председателĕ**
**И. НИКОЛАЕВ.**
**Район администрацийĕн пуçлăхĕ**
**Р. ТИМОФЕЕВ.**

**Ял тăрăхĕсенче**

# Хорнуйсем кăçал та тĕлĕнтерчĕç



**Пĕчĕк хуранăн пăтти тутлă тесе калаççĕ те, пысăккин те техĕмлĕ. Сăмах – Хорнуй ялĕ пирки. 270 яхăн кил хуçалăхĕнчен тăракан районти пысăк ялсенчен пĕринче иртнĕ канмалли кун ял-йыш пĕрле пухăнса ял кунне уявларĕ – кăçал та хăйĕн пултарулăхĕпе, тăрăшулăхĕпе тĕлĕнтерчĕ.**

Ял кунне ирттерессипе йĕркелӳ комитечĕ пĕрре мар пухăнса канашланă: уяв тематикине, программине сӳтсе явнă. Çапла вара ял кунне те пурнăçран юлмасăр футбол, волонтер тата Иван Яковлева халаллама шутланă.

– Хорнуй ялĕнче талантлă çын нумай, çакăн пек уявсенче вĕсем хăйсен пултарулăхне кăтартса параççĕ. Çавăнпах ялти пилĕк урамри коллективсем пултарулăх номерĕсене хатĕрленĕ чухне чылай çынна явăçтарма пултараççĕ, – каласа парать ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Манефа Колесникова.

Чăнах та, уяв вырăнне кашни урам хăйĕн ушкăнĕпе юрла-юрла пухăнчĕ. Кашни ушкăн çи-пуçпа уйрăлса тăрать. Козьмой урамĕнче пурăнакансем спорт тумне тăхăннă, утса пынă вăхăтрах футболла вылякан̆ те пур; пашалукассисем те спортра туслине кăтартса пама тăрăшрĕç. Чаканар урамĕнчепурăнакансем акă чăваш тумĕпе саркаланса юрласа хăпарчĕç. Школьная урамрисем хăнасене кĕтсе илчĕç – ыттисенчен уйрăлса тăракан тумлăскерсем уява килнĕ хăнасене «ырă чĕресем» валеçсе тухрĕç. Кайран çав «чĕресем» çинчи номерсемпе шăпах лотерея вылявне ирттерчĕç.

Хăна та чылай пухăнчĕ уява.

– Хальхи вăхăтра ял халăхĕ çакăн пек уявсенче пĕрле пухăнса калаçать, канашлать. Хорнуй ялĕнче вара ачасем нумайăй уйрăмах савăнтарать, апла пулсан ял аталанса пырать, – тесе палăртрĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев хорнуйсене саламланă май.

Ачасем тенĕрен, уява шăпах вĕсем пуçларĕç – 40 яхăн ача велочупăва хутшăнчĕ.

Депутатсен район Пухăвĕн депутачĕ Александр Сидюшкин та ентешсем хастар пулнипе кăмăллă. Вăл ял халăхĕ тăрăшнипе Хорнуйĕнче стадион тума пултарнине пĕлтерчĕ. Çавăнпах Ростислав Тимофеевпа пĕрле вĕсем ял халăхне унта выляма тĕрлĕ йышши мечĕк парнелерĕç. Май килсен çитес çул стадиона пуçарулăх бюджечĕн мелĕпе усă курса йĕркене кĕртсе çитерме тăрăшасса та каларĕ Александр Сидюшкин.

Хорнуйсем кăçал та пуçарулăх бюджечĕпе усă курса Первомайская урамра (Пашалукасси теççĕ ялта) 360 метра яхăн çул сарма пултарнă: ял тăрăхĕн депутачĕ Петр Хмелев каланă тăрăх, 23 кил хуçалăхĕ 90 пин тенкĕ пухнă. Ытти урамсем художество пултарулăх концертне савăнтарнă вăхăтра çак урамра пурăнакансемпе тĕплĕнрех калаçма май пулчĕ. Вĕсем каланă тăрăх, ял кунне тахçанах хатĕрленме тытăннă.

– Ирлесе ĕнесене касăва ăсататпăр та, ĕçе каиччен репетици туса илме ĕлкĕретпĕр, – теççĕ вăр-варскерсем.

Хăйсен кил картишне пашалукассисем Раççейре иртнĕ футбол тĕнче чемпионатне халалланă. Картишĕн икĕ енĕпе чăн-чăн футбол хапхисем вырнаçтарнă. Вĕсене уяв валли ятарласа хатĕрленĕ, анчах та стадионти футбол уйĕ валли пултăр тесе калăпăшсене шута илсе тунă. Ял уявĕнчен хапхасене тӳрех стадиона ăсатасса пĕлтерчĕç вĕсем. Ачасем валли парне пулать терĕç. Парне тенĕрен вара, пашалукассисем çулсеренех ял уявне хастар хутшăнакан ачисене пурте пĕрле çул çӳреве те илсе тухаççĕ-мĕн.

– Пирĕн сĕтел те кăçал футболпах çыхăннă. Акă курăр: торт та футбол уйĕ евĕр, салачĕ те футбол мечĕкĕллĕ, – тесе каласа кăтартаççĕ.

Козьмой урамĕсен кил картишĕнче те, Чаканар урамĕн кил картишĕнче те Иван Яковлев ларать. Кăçал 170 çул тултарнă шур сухаллă ватă хăйĕн халалĕпе те, пĕррремĕш чăваш букварĕпе те паллаштарать. Садовая урама акăшсем те «вĕçсе килнĕ», кунти кӳлĕре ишеççĕ. Чаканар урамĕн картишĕнче 90 çул урлă каçнă Лидия Афанасьева çăм арлать...

Çапла тĕплĕн хатĕрленнĕ уява ял халăхĕ: кашни урам хăйне май пултарулла.

– Кун пек уявсенче пĕрре мар пулма тӳр килнĕ, анчах ял кунне сирĕн пек тĕплĕ хатĕрленсе ирттерекенсем республикăра та нумай мар. Эсир маттурсем, – хорнуйсене ял кунĕпе саламласа çапла палăртрĕ Чăваш наци конгресĕн ыркăмăллăх фончĕн председателĕ – пирĕн хастар ентеш Павел Вязов.

Уява хатĕрленсе ирттерессинче хăй çине ытларах ответлăх илнисем çак кун Чăваш наци конгресĕн Хисеп грамотине, район администрацийĕн тата ял тăрăхĕн Тав хучĕсене тивĕçрĕç. Спонсорсене кашнине ятран палăртса тав сăмахĕ каларĕç.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ çумĕнчи общество канашĕн ертӳçин çумĕ Александр Куликов та парнепе çитнĕ: кашни урама «Сывлăх» спорт шкулне тӳлевсĕр килмелли сертификат парса чысларĕ.

Тĕрлĕ номерпе пуян концерта курма пурте хавас пулчĕç: Раççей пародисчĕсем те, чăваш театрĕн артисчĕсем те «хăнана килнĕ». Çав номерсене ялти юбилярсене халалласа чыс турĕç. Савăк кăмăл, юрă-ташă, парнесем, ачасем валли батут, техĕмлĕ апат-çимĕç – пĕтĕмпех пулчĕ уявра. Çамрăксем юнашарти стадионта волейболла та вылярĕç.

Çапла, ял уявĕсене хорнуйсем пек тĕплĕ хатĕрленсе ирттермелле, апла мар пулсан ĕçе тытăннин усси сахал.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Сад-пахчаçăн уйăх календарĕ**

## Йăран хатĕрлес пулать

**Кун тăршшĕ 2 сехет те 10 минут кĕскелчĕ. Çĕр ĕçченĕ вырмара вăй хурать. Кĕçех сад-пахчара та кĕрхи ĕçсем пуçланĕç. Çавăнпа та вĕсене кашнин хатĕр пулмалла. Кăçал пан улми уйрăмах йышлă пулнине кура ун сĕткенне хĕл валли хатĕрлесси çине тимлĕх уйăрмалла.**

**Çурла уйăхĕн 11 – 12-мĕшĕсем.** Пахчари çӳп-çапа пĕр çĕре пуххса çунтарса ярăр. Тымар çимĕç пуçтарăр. Кĕрхи ĕçсем валли йăрансем кăпкалатăр. Сырлан тата хура пилеш пуçтарма пуçлама, ир пулакан пан улми консервăлама юрать. Нумай çул ӳсекен чечексене – пионсене, ириссене, ландышсене, примуласене т. ыт. те – пайлама тата куçарса лартма меллĕ пулнине ан манăр. Пахча çимĕçпе улма-çырлана пуçтарса тирпейлемелли лайăх кунсем шутланаççĕ. Хурлăханăн пĕр çулхи çинçе хунавĕсен тăррисене касса иртĕр.

**Çурла уйăхĕн 13-мĕшĕ.** Сад-пахча тĕлĕшпе тимлĕ пулăр. Пахча çимĕçе, улма-çырлана хĕл касма ытларах тирпейлеме тăрăшăр.

**Çурла уйăхĕн 14 – 16-мĕшĕсем.** Нимĕн те акма, касса татма сĕнместпĕр. Хăяр та ан тăварлăр. Пушаннă йăрансем çинчи çĕре кăпкалатăр. Помидорпа хăяра хĕл валли тăварлама тата маринадлама тытăнса тăрăр. Хуçалăх ĕçĕсем ытларах пурнăçлăр.

**Пирĕн календарь**

## Прусси çарĕсене аркатнă

Августăн 12-мĕшĕ – Раççей çар историйĕн паллă кунĕ. Çак кун 1759 çулта Салтыков ертсе пыракан вырăссен çарĕ Кунерсдорфшăн пынă çапăçура Прусси çарне çапса аркатнă. Çакă çичĕ çула пынă вăрçăри (семилетняя война) вырăссен чи пĕлтерĕшлĕ те тăвăллă çĕнтерӳ пулнă. Иккĕмĕш Фридрих çарĕ тек хирĕç тăма пултарайман, хăйне вара казаксем кăшт кăна тытăна илеймен. Çак çапăçу хыççăн вырăс çарĕсем Берлина кĕнĕ.

Шкула кайма хатĕрленетпĕр

# Пĕрремĕш класс ачин рюкзакĕ мĕнле пулмалла?

Кĕçех çĕнĕ вĕренӳ çулĕ те пуçланĕ, çавна май халĕ шкула кайма хатĕрленес хĕрӳ тапхăр пырать. Ашшĕ-амăшĕн чи малтанах ачан рюкзакĕ çине пысăк тимлĕх уйăрмалла. Вăл куллен йăтмалли хатĕр, çавăнпа та пур енлĕ меллĕ пулмалла.

Çурăм çине çакăнакан пайĕ шал енчен тимĕр каркаслине суйлама тăрăшăр. Çакă рюкзакăн йывăрăшне çурăм тата çурăм шăмми çине пĕрешкел пайлама май парать. Рюкзакăн лямки çемçе пулмалла тата вăл кĕскелтĕр, вăрăмлантăр, 5 – 8 сантиметр сарлакăшлĕ пулсан аван.

Пĕрремĕш класа каякан ачан пушă рюкзакĕ пĕр килограмран ытла таймалла мар, формипе тӳрĕ кĕтеслĕ пулмалла. Кĕнеке тултарнă рюкзакăн форми улшăнмалла мар. Паллах, рюкзак хул пуççирен сарлака ан пултăр. Аялти пайĕ ачан пилĕкĕ тĕлĕнчен иртмелле.

Рюкзака мĕнле материалтан хатĕрлени те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ытларах чухне ăна полиэстертан çĕлеççĕ, шыв ямалла мар хутăшла сăрхăнтараççĕ. Пахалăхлă материалтан тунă рюкзака нӳрĕ татăкпа сăтăрса илме те меллĕ. Вăчăра çăмăллăн уçăлтăр, ăна пĕр алăпа та уçма май килтĕр.

Шалта темиçе уйăмлă рюкзак усă курма лайăх. Пĕрле аксессуар – пенал, пушмак хутаççи, альбомпа тетрадь папки – пулсан аван. Çавăн пекех рюкзак çинче çутта хирĕç çутатакан пай пулмалли пирки те ан манăр.

**В. МАТВЕЕВ,**
**пĕтĕмĕшле гигиена**
**врачĕн пулăшаканĕ.**

Ял уявĕнчен

# Уява В. Теплова халалларăмăр



Çатракасси ял кунне 2011 çултанпа уявлатпăр. Кăçал эпир ăна Чăваш Республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Василий Теплов 90 çулĕ тултарнине халаллас терĕмĕр.

Ял уявĕн программи анлă та пуян пулчĕ. Çав кун уяв программипе килĕшӳллĕн В.Г. Теплова халалланă сăн ӳкерчĕксен стендне, ача-пăча ӳкерчĕкĕсен тата ал ĕçĕсен, юбиляр кун-çулĕпе паллаштаракан кĕнекесен куравĕсене йĕркелерĕмĕр.

Курав хыççăн В. Теплов кун-çулне пур енчен те аван пĕлекен тăванĕ, ветерансен вырăнти канашĕн ертӳçи А. Анисимова тата В. Тепловăн хĕрĕ А. Ятманова сăмах каларĕç. Çатракассинчи Культура çуртĕ çумĕнчи В. Теплов йĕркелесе ертсе пынă хор ветеранĕсем, Романовсен çемье ансамблĕне пĕчĕклех хутшăннă А. Васильева та хăйсен ертӳçине ăшă сăмахсемпе аса илчĕç.

Василий Григорьевич Çатракассинчи Культура çуртĕнче 30 çула яхăн вăй хунă. Çав вăхăтрах Çатракасси шкулĕнче музыка тата рисовани учителĕ пулса ĕçленĕ. Ĕçне кура – хисепĕ. В.Г. Теплов – Чăваш Республикин музыка обществин хисеплĕ ĕçченĕ, ЧР тава тивĕçлĕ культура ĕçченĕ.

В. Теплов çинчен ытларах пĕлес текенсем валли уявра «Первый парень на деревне» буклет та, В. Мартынов çырнă «У реки Кудярки», «Несущие свет и знание» кĕнекесем те пулчĕç.

Уяв кунпах вĕсленмерĕ. Москакассинчи Культура çурчĕ çумĕнчи пултарулăх ушкăнĕ концерт программипе савăнтарчĕ. Куракансене уйрăмах Дарья Макарова тыткăнларĕ. Çатракасси шкулĕн ташă ансамблĕсем те концерта илем кӳчĕç. Çав хушăрах сцена çинче В. Теплова асăнса купăссăсен конкурсĕ те иртрĕ.

Курава тăратнă ĕçсене, конкурса хутшăнакансене ятарлă жюри хак пачĕ, пурне те сертификатсемпе чысларĕ. Жюри членĕсем пĕтĕмлетӳ тунă çĕре техĕмлĕ така шӳрпин шăрши Кутерка юханшывĕн лапамĕпех сарăлчĕ.

**С. ФЕДОРОВА.**

Çатракасси ялĕ.

**Сăн ӳкерчĕкре: В. Теплов ертсе пынă хорта юрланисен ушкăнĕ.**

Пĕлтерӳсем/Объявления

## Кандидатсене пĕлме

Чăваш Республикин депутатсен Муркаш район Пухăвĕн депутачĕсен хушма суйлавне Муркаш, Москакасси, Çатракасси, Турай, Шетмĕпуç, Йӳçкасси ял тăрăхĕсен депутатсен Пухăвĕсен депутачĕсен хушма суйлавне хутшăнма регистрациленĕ кандидатсем валли районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçатра тӳлевсĕр майпа суйлав умĕнхи агитаци материалĕсене вырнаçтарма пичет лаптăкĕсем валеçессипе шăпа 2018 çулхи августăн 9-мĕшĕнче 10 сехетре Муркашри территори суйлав комиссийĕнче туртнă.

Регистрациленĕ мĕнпур кандидат валли 1628 тăваткал см сентябрĕн 1-мĕшĕнчи номерте уйăрма палăртнă.

Заявкăсем пулман пирки тӳлевлĕ майпа пичет лаптăкĕ валеçессипе шăпа туртман.

**ТЕПЛИЦЫ. Тел. 8-937-372-99-93. 2-10.**

* * *

**Хаклă хакпа ĕнесем, вăкăрсем, чирлĕ выльăхсем туянатпăр тата колхозсемпе те ĕçлетпĕр. Тел. 8-919-974-46-14. 7-10.**

* * *

**Монтаж систем отопления и водоснабжения; установка дымоходов и вентиляций; сверление отверстий алмазной коронкой под дымоходы, вентиляцию и канализацию (бетон, кирпич, дерево). Тел. 8-937-010-02-30, 8-927-851-44-23. 3-10.**

* * *

**Закупаю КРС в любом виде. Тел. 8-930-685-34-35. 2-5.**

* * *

**Продается деревянный дом в дер. Ятманкино, газ, зем. участок 40 сот., сарай. Ценадоговорная.Тел.8-927-847-78-27. 2-3.**

* * *

**Услуги БАРМАШИНЫ и экскаватора под коммуникации. Прокол под дорогой. Тел. 8-927-860-90-70. 2-10.**

* * *

**Продается однокомнатная квартира на 1/9 эт., в СЗР по ул. Ахазова, д. 1, после ремонта, во дворе школа, садик, рядом детская поликлиника. Тел. 8-917-659-37-13. 2-3.**

* * *

**Требуются свиноводы в ООО «Бездна» в дер. Рыкакасы. З/п своевременная со всеми соц. пакетами. Тел. 8-906-388-66-04. 2-5.**

* * *

**Куплю коров, бычков, телок, молочных телят, баранов, овец. Тел. 8-905-341-69-25. 2-5.**

* * *

**Куплю скотину дорого: КОРОВ, БЫЧКОВ, ТЕЛОК, ВЫНУЖДЕННЫЙ ЗАБОЙ. Тел. 8-961-345-77-89. 2-25.**

* * *

**Продаем бычков, молодняк. Доставка. Тел. 8-987-126-30-07. 1-16.**

* * *

**Услуги мини-экскаватора. Ширина ковша – 30, 40, 50 см., глубина – 2,7 м. Канализация, водопровод под ключ. Час работы – 1000 руб. + доставка. Работаем с организациями по безналичному расчету. Тел. 8-927-847-85-59, 8-962-599-04-70. 1-4.**

* * *

**Ремонт и обслуживание стиральных машин-автоматов. Гарантия. Быстро и качественно. Тел. 38-58-45, 8-927-668-58-45. 9-10.**

* * *

**Администрация МБОУ «Тораевская СОШ» принимает на работу водителя школьного автобуса. Тел. 8-835-41-64-2-47. 1-2.**

* * *

**Зааненски качака путеккисем сутатăп. Тел. 8-906-383-77-28.**

* * *

**Сдаю квартиру девушкам в НЮР г. Чебоксары, за ТЦ «Лента». Тел. 8-937-375-46-26.**

* * *

**Декабрĕн 23-мĕшĕнче пăруламалли хĕрлĕ тынашки сутатăп. Тел. 8-906-387-71-66.**

**ИП Кудряшов: монтаж систем отопления, водоснабжения, канализации; замена, установка газовых котлов и насосов. Установка, замена дымоходов. Обращаться по адресу: ул. Чапаева, д. 44, магазин «ДУЭТ». Тел.: 8-917-668-12-87, 8-965-682-39-15. 10-10.**

* * *

**ИП Налимов: монтаж систем отопления, водоснабжения, канализации; замена, установка газовых котлов и насосов. Установка, замена дымоходов. ПРОДАЮ ГАЗОВЫЕ КОТЛЫ, СЧЕТЧИКИ и др. Обращаться: с. Моргауши, здание бани, 2 этаж. Тел. 8-905-345-93-19. 9-10.**

* * *

**Фундамент, кирпичная кладка, кровля любой сложности. Деревянные дома и бани, отделка домов сайдингом. Проект, смета бесплатно. Офис: с. Моргауши, Дом быта, каб. 4. Тел. 8-927-865-60-00, 8-937-940-80-55. 6-10.**

* * *

**ПЕСОК КАРЬЕРНЫЙ, РЕЧНОЙ, ГРАВМАССА, ЩЕБЕНЬ, БОЙ КИРПИЧА, ГРУНТ, НАВОЗ и.т.д. Доставка по Моргаушскому району от 1 до 20 тонн. НЕДОРОГО. Тел. 8-905-345-96-62. 3-10.**

* * *

**Заборы, ворота, навесы, палисадники самых разных видов из профнастила, евроштакетника, сетки-рабицы. Надежно, быстро, дешево. Тел. 8-937-942-87-85. 7-10.**

* * *

**Закупаю коров, бычков. Тел. 8-965-688-01-77. 6-10.**

* * *

**Продаю сено, разнотравие, нового укоса в рулонах по 350 кг., 700 руб. за рулон, тюки – 70 рублей. Возможна доставка и погрузка. Тел. 8-905-199-92-46. 5-5.**

* * *

**Куплю старые подушки, перины, пух гусиный, утиный. Тел. 8-999-609-50-32. 2-4.**

* * *

**Продаю пшеницу, солому в тюках. Есть доставка. Тел. 8-927-669-42-53. 3-3.**

* * *

**КФХ «Сундырь» реализует новый урожай: зерновые культуры, солому и сено в рулонах. Возможна доставка. Тел. 8-987-760-57-71. 3-3.**

* * *

**Ноябрь уйăхĕнче улттăмĕш пăруламалли хура-шурă, январь уйăхĕнче иккĕмĕш пăруламалли хура тĕслĕ ĕнесем сутатăп. Тел. 8-961-345-56-11, 8-905-197-12-47. 2-2.**

* * *

**Продается комната пл. 18 кв. м в ЮЗР по ул. Социалистическая, 15, 3/5. Комната в хорошем состоянии, остается частично мебель. Собственник. Тел. 8-960-305-88-85, 8-906-384-18-80. 1-3.**

* * *

**Продаю: новый УАЗ бортово-тентованный 2014 г. в., запчасти от ГАЗ-53, самосвал ЗИЛ-130. Ядринский район, тел. 8-906-389-29-95.**

* * *

**Продаю пшеницу, солому в рулонах. Есть доставка. Тел. 8-961-338-21-08.**

* * *

**Ищу работу сварщика. Тел. 8-951-999-97-32.**

* * *

**Тюкланă улăм сутатăп. Тел. 8-903-063-71-30.**

* * *

**Юнкă ялĕнче пурăнмалли кирпĕч çурт сутатăп, 65 кв. м. Хакĕ калаçса таталнă тăрăх. Тел. 8-937-384-27-87. 1-2.**

* * *

**Сентябрь вĕçĕнче 3-мĕш пăруламалли ĕне, качака тата качака путеккисене сутатпăр. Тел. 8-937-382-64-85.**

## Программа Национального телевидения Чувашии 13 – 15 августа 2018 г.

**Понедельник, 13 августа**

06.00 «Иксĕлми çăлкуçсем». Гала-концерт (12+)
08.30 «Основной элемент». Документальный фильм (12+)
09.00 «Шок шоу» (12+)
09.30 «Смешарики» (6+)
10.00 «Пляж». Многосерийный фильм (12+)
11.00 «Возвращение Мухтара». Многосерийный фильм (16+)
12.00 «Удар властью» . Документальный фильм (16+)
13.00 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ
13.05 «Время вкуса» (12+)
13.30 «Республика». Информационная программа
13.40 «Комфортный город» (12+)
14.00 «Основной элемент». Документальный фильм (12+)
14.30 «Правовое поле» (12+)
15.00 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ (12+)
15.05 «Фиксики» (6+)
15.30 «Республика». Информационная программа (12+)
15.40 «Мультимир» (6+)
16.00 «Горюнов». Многосерийный фильм (16+)
17.00 «Мы родом из мультиков» . Документальный фильм (16+)
18.00 «Республика в деталях» (6+)
18.30 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ
19.00 «Кăмăл турамĕ» (6+)
19.30 «Республика». Информационная программа
20.00 «Экономика в деталях» (12+)
20.15 «Время здоровья» (12+)
20.30 «Акилбупсер» (6+)
21.00 «Вăрмана юлнă çамрăклăх». Драма (12+)
23.00 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ (12+)
23.30 «Республика». Информационная программа (12+)
00.00 «Мастер». Драма (16+)
01.30 «Кăмăл турамĕ» (6+)
02.00 «Республика в деталях» (6+)
02.30 «И в шутку, и всерьез» (6+)
03.00 «Акилбупсер» (6+)
03.15 «Экономика в деталях» (12+)
03.30 «Мы родом из мультиков» . Документальный фильм (16+)
04.30 «Горюнов». Многосерийный фильм (16+)
05.30 «Мультимир» (6+)

**Вторник, 14 августа**

06.00 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ (12+)
06.30 «Республика». Информационная программа (12+)
07.00 «Экономика в деталях» (12+)
07.30 «Акилбупсер» (6+)
08.00 «Смешарики» (6+)
08.30 «Основной элемент». Документальный фильм (12+)
09.00 «Республика в деталях» (12+)
09.30 «Мультимир» (6+)
10.00 «Пляж». Многосерийный фильм (12+)
11.00 «Возвращение Мухтара». Многосерийный фильм (16+)
12.00 «Удар властью» . Документальный фильм (16+)
13.00 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ
13.05 «Республика в деталях» (6+)
13.30 «Республика». Информационная программа
13.40 «Время спорта» (12+)
14.00 «Основной элемент». Документальный фильм (12+)
14.30 «Экономика в деталях» (12+)
15.00 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ (12+)
15.05 «Фиксики» (6+)
15.30 «Республика». Информационная программа (12+)
15.40 «Смешарики» (6+)
16.00 «Горюнов». Многосерийный фильм (16+)
17.00 «Евгений Меньшов. Ослепительный миг» . Документальный фильм (16+)
18.00 «Республика в деталях» (12+)
18.30 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ
19.00 «Туслăх йывăçĕ (12+)
19.30 «Республика». Информационная программа
20.00 «Правовое поле» (12+)
20.30 «Приложение силы» (12+)
21.30 «Асамат» ушкăн концерчĕ (12+)
23.00 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ (12+)
23.30 «Республика». Информационная программа (12+)
00.00 «Посторонний». Драма (16+)
01.30 «Туслăх йывăçĕ (12+)
02.00 «Республика в деталях» (12+)
02.30 «Приложение силы» (12+)
03.30 «Евгений Меньшов. Ослепительный миг» . Документальный фильм (16+)
04.30 «Горюнов». Многосерийный фильм (16+)
05.30 «Мультимир» (6+)

**Среда, 15 августа**

06.00 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ (12+)
06.30 «Республика». Информационная программа (12+)
07.00 «Правовое поле» (12+)
07.30 «Туслăх йывăçĕ (12+)
08.00 «Смешарики» (6+)
08.30 «Основной элемент». Документальный фильм (12+)
09.00 «Республика в деталях» (12+)
09.30 «Мультимир» (6+)
10.00 «Пляж». Многосерийный фильм (12+)
11.00 «Возвращение Мухтара». Многосерийный фильм (16+)
12.00 «Звездные войны Владимира Челомея» . Документальный фильм (16+)
13.00 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ
13.05 «Республика в деталях» (12+)
13.30 «Республика». Информационная программа
13.40 «Правовое поле» (12+)
14.00 «В мире животных с Николаем Дроздовым» (12+)
14.30 «Туслăх йывăçĕ (12+)
15.00 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ (12+)
15.05 «Время здоровья (12+)
15.30 «Республика». Информационная программа (12+)
15.40 «Фиксики» (6+)
16.00 «Горюнов». Многосерийный фильм (16+)
17.00 «Владимир Грамматиков. В движении». Документальный фильм (16+)
18.00 «Республика в деталях» (12+)
18.30 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ
19.00 «Эх, юррăм, янăра!» 12+)
19.30 «Республика». Информационная программа
20.00 «Учим чувашский» (12+)
20.30 «Нулевой километр» (12+)
21.00 «Пĕчченнисене общежити параççĕ». Чăвашла куçарнă фильм (12+)
23.00 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ (12+)
23.30 «Республика». Информационная программа (12+)
00.00 «Родительский день». Драма (16+)
01.30 «Эх, юррăм, янăра!» (12+)
02.00 «Республика в деталях» (12+)
02.30 «Учим чувашский» (12+)
03.00 «Нулевой километр» (12+)
03.30 «Владимир Грамматиков. В движении». Документальный фильм (16+)
04.30 «Горюнов». Многосерийный фильм (16+)
05.30 «Мультимир» (6+)

